25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942 ОКТЯБРЬ 16 ЭРНЕКУН 242 (6177) №.

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн, ЧАССР Верховнăй Совечĕпе тата Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

Европăри оккупациленĕ çĕршывсенче тунă тискер ĕçсемшĕн гитлерла захватчиксем тата вĕсемпе пĕр каварлисем ответлă пулни çинчен Совет Правительстви тунă заявлени

Чехословаки республикин чрезвычайнăй посланникĕ тата полномочнăй министрĕ г. Фирлингер тата Франци национальнăй комитечĕн представителĕ г. Гарро Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ патне кăçалхи июлĕн 23-мĕшĕнче СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. В. Сталин ячĕпе Чехословаки, Польша, Югослави, Норвеги, Греци, Бельги, Голланди, Люксембург правительствисен тата Франци национальнăй комитечĕн, «Вăрçă вăхăтĕнче тунă преступленисемшĕн наказани парасси çинчен» кăçалхи январĕн 13-мĕшĕнче алă пуснă [illegible], коллективлă нотине панă. Çав нотăра гитлеровецсем хăйсем оккупациленĕ çĕршывсенче тунă тискер ĕçсемшĕн [illegible] Совет Союзне [illegible].

Октябрĕн 14-мĕшĕнче Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов, Совет Правительстви хушнипе, г—н Фирлингер тата г—н Гаррона алăпахра кăтартнă çак заявлени панă:

Гитлерла Германи вăхăтлăха оккупациленĕ çĕршывсен представителĕсен Сталин патне чĕнсе çырнине—гитлеровецсем хăйсем оккупациленĕ территорисем çинче тунă тискер ĕçсемшĕн ответлă пулни çинчен [illegible] пăхса тухса, СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. В. Сталин, Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарне Чехословаки, Польша, Югослави, Норвеги, Греци, Бельги, Голланди, Люксембург правительствисене тата Франци национальнăй комитечĕ патне Совет Правительстви [illegible] кăтартнă çак заявлени пама хушрĕ:

Европăн гитлерла Германи оккупациленĕ çĕршывĕсенчи халăхсен асапĕсемпе вĕсен ирĕклĕхĕшĕн пыракан кĕрешĕвĕ çине Совет Правительстви [illegible]. Гитлерла тирани çав халăхсене [illegible] Совет Союзĕн [illegible] гитлерла захватчиксем Совет Союзĕн вăхăтлăха оккупациленĕ районĕсенче [illegible] тискер преступленийĕсене хăрушла пысăк масштабсене туса пыраççĕ,—вĕсем мирлĕ халăха массăллăн вĕлереççĕ, [illegible] çинчен пĕлтерни [illegible] халĕ Совет Правительствине панă коллективлă чĕнӳре пĕлтернĕ [illegible] сведенисем гитлеровецсене юнлă преступленийĕсем пур çĕрте те ятарласа туса пыракан преступленисем пулса тăнине çĕнĕрен çирĕплетсе параççĕ, çавăн пекех çаксем вĕсем оккупациленĕ çĕршывсенчи халăхсене чуралăха кĕртсе ӳкерме, вĕсен культурине аркатса тăкма тата вĕсен нацилле тивĕçлĕхне пусарса лартма хапсăнакан нимĕçсен фашистла правительстви тата унпа пĕр каварлисем хăйсен умне тытса илнĕ территорисем çинчи халăхсен нумайрахĕш пайне кĕретĕнех вĕлерсе пĕтерес тĕллев лартнине те кăтартса параççĕ.

Совет правительстви çавăнпа пĕрлех акна палăртать: Германи фашисчĕсем ынсене хăратнипе те, сутăн илнипе те, халăхсем хушшинче хирĕçӳсем кĕртсе яма хăтланнипе те, çаратнипе те, выçлăхпа та, халăха юн тăктарса асаплантарнипе те Европăри халăхсен оккупантсене хирĕç пыракан кĕрешӳри, хăйсен çĕршывĕсене ирĕклĕхе кăларассишĕн тата вĕсен никама пăхăнманлăхне ура çине тăратассишĕн пыракан кĕрешӳри çирĕплĕхне хавшатма пултараймарĕç. Гитлеровецсем пусмăрлакан çĕршывсенчи патриотсем, ирĕклĕхшĕн пыракан çак тĕрĕслĕхлĕ кĕрешӳ кӳрекен жертвăсенчен хăраса тăмасăр, тăшмана пĕр хĕрхенсе тăмасăр, тăшманпа тата унпа пĕр каварлисемпе пĕр килĕшӳ тумасăр, захватчиксене хирĕç кĕрешнĕ çĕрте хăйсем усă курма пултаракан пур майсемпе те, халăхсен партизанла движенине сарса яни таранах, пур майсемпе те усă кураççĕ.

Гитлеровецсем пусмăрлакан халăхсен [illegible] ирĕклĕхĕшĕн тата никама пăхăнманлăхĕшĕн паттăррăн кĕрешекенсем, гитлерла оккупантсене тата Германи вăрçă машинине [illegible] вĕсемпе кĕрешеççĕ, ĕçсен [illegible]. Вĕсем [illegible] меслетсемпе кĕрешеççĕ [illegible], производствăра [illegible], заводсене, электростанцисене, шахтăсене [illegible], [illegible] оккупантсем [illegible] тупăшлă [illegible] хирĕç бойкот организациленĕ; Европăри [illegible] Германие [illegible] хирĕç [illegible] Германин [illegible] гитлеровецсем [illegible] Германи вăрçă-хурахла [illegible] Германин [illegible]. Çакă Европăри халăхсен [illegible] хирĕç [illegible] Совет Союзĕн [illegible] халăхĕсене [illegible] Югослави [illegible] партизансен [illegible] патриотсем тăшмана [illegible] малалла сĕнни куçĕ.

Иккĕленмелли çук, ирĕклĕхшĕн пур [illegible] çак [illegible] халăхсен [illegible] пĕтĕм [illegible] вĕсен [illegible] гитлерла [illegible] Германи [illegible] таварăн [illegible] сехетне çывхарте.

Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн В. М. Молотовăн нотисенче: 1941 çулхи ноябрĕн 25-мĕшĕнче—Советăн тыткăна лекнĕ çар çыннисем тĕлĕшпе Германи влаçĕсем тĕлĕнмелле тискер ĕçсем туни çинчен, кăçалхи январĕн 6-мĕшĕнче—Германи влаçĕсем хăйсем тытса илнĕ совет территорийĕсем çинче пур çĕрте те халăха çаратса юхăнтарни çинчен тата тискер кайăкла çав тери хăрушă ĕçсем туни çинчен, кăçалхи апрелĕн 27-мĕшĕнче—оккупациленĕ совет районĕсенче Германи влаçĕсем çав тери усал, тискер тата пусмăрла ĕçсем туни çинчен тата çав преступленисемшĕн Германи правительствипе командованийĕ ответлă пулса тăни çинчен çырса янă нотисенче, Совет Союзĕ дипломатиллĕ çыхăну тытса тăракан мĕнпур правительствăсем патне янăскерсенче, Совет правительстви «нимĕç войскисен этемле мар тискер тата вăрă-хурахла ĕçĕсемшĕн пĕтĕм ответлăха Германин преступлениллĕ гитлерла правительстви çине хунă» тата вăл çапла каланă: «Гитлерла правительство тата ăна пулăшакансем Совет Союзĕн халăхĕсемпе ирĕклĕхе юратакан мĕнпур халăхсене хирĕç тунă пур усал ĕçсемшĕн та хаяррăн тавăрассинчен тата тивĕçлипе наказани парассинчен çăлăнса юлаймĕç», тенĕ. Совет правительстви тата çапла пĕлтернĕ: совет органĕсем «гитлерла çарăн çав усал преступленийĕсене пурне те шута илсе пыраççĕ, çиленнĕ совет халăхĕ вĕсемшĕн тавăрма ыйтать тата тавăрĕ те»—тенĕ

Гитлеровецсем Германин правительстви тата çар влаçĕсемпе граждăнла [illegible] вăхăтлăха оккупациленĕ [illegible] материалсене [illegible] пĕтерекенсене [illegible] Совет Правительстви [illegible].

[illegible] хăшлать. Совет Правительстви союзлă правительствăсемпе туслă правительствăсен çав тĕллеве пурнăçламашкăн тăвакан практикăллă мероприятийĕсене хапăл туса пулăшма хатĕр тăрать тата вăл çакна шанса тăрать: оккупациленĕ территорисенче преступленисем организациленĕшĕн, вĕсене ырласа тăнăшăн е вĕсене тунăшăн айăплă пулса тăракан гитлеровецсене тата вĕсемпе пĕр каварлисене шыраса тупас, тытса парас, суда парас тата хытă айăплас тĕлĕшпе государствăсем пĕр-пĕрне пулăшса тăрĕç тесе шанса тăрать.

Совет Правительстви Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен президенчĕ Рузвельт господин хăйĕн октябрĕн 12-мĕшĕнче каланă сăмахĕнче «нацистсен пуçлăхĕсене, шутсăр нумай тискерлĕхсемшĕн хăйсем айăплă пулса тăраканскерсене» наказани парасси çинчен тунă заявленипе килĕшет, вăл—«лидерсен шайккине тата вĕсемпе пĕр каварлă хаяр çынсене ятран каламалла, арестлемелле тата Уголовнăй закон тăрăх айăпламалла» тесе каланипе килĕшет. Преступлениллĕ гитлерла шайкăн пуçлăхĕсен—Гитлерăн, Герингăн, Гессăн, Геббельсăн, Гиммлерăн, Риббентропăн, Розенбергăн тата фашистла Германин руководителĕсен тискер ĕçсем тăвакан ытти организаторĕсен ячĕсемпе юнлă усал ĕçĕсене пĕтĕм этемлĕх пĕлет ĕнтĕ. Совет правительстви çапла шухăшлать: преступлениллĕ гитлерла шайкăн тăрă шыв çине кăларнă пуçлăхĕсене хытă айăплассине унăн, хăйсен никама пăхăнманлăхне гитлерла йыткĕтĕвĕсенчен сыхласа тăракан мĕнпур государствăсен правительствисем пекех, хăйĕн халех тумалли тивĕçĕ тесе шутламалла, ăна çав малта кăтартнă преступниксем хушнипе тискеррĕн асаплантарнă тата вĕлернĕ питех те йышлă тăлăх арăмсемпе тăлăха юлнă ачасемшĕн, вĕсен тăванĕсемпе çывăх çыннисемшĕн тумалли ĕç тесе шутлама тивĕçлĕ. Совет Правительстви фашистла Германин пуçлăхĕсенчен кирек хăшне те, вăрçă вăхăтĕнче гитлерла Германие хирĕç кĕрешекен государствăсен влаçĕ аллине лекнĕскерсене, халех пĕтĕм тĕнчери специальнăй трибунала суда памалла тата вĕсене уголовнăй законăн пĕтĕм çирĕплĕхĕпе наказани памалла тесе шутлать.

Преступлениллĕ гитлерла правительсем тата вĕсене пулăшакансем пурте хăйсем тăвакан тискер ĕçсемшĕн питĕ йывăр наказани илмелли çинчен совет правительстви хăй асăрхаттарнине хальхи вăхăтра тепĕр хут каласа парса, вăл хăйĕн официальнăй йĕркепе тунă заявленийĕсенче кăтартнă çак шухăшсене тепĕр хут çирĕплетсе пама вăхăт тесе шутлать: вăя анчах йышăнакан гитлерла правительствăна «ирĕклĕхе юратакан халăхсен пурне те сĕнтерекен вăйĕ çапса хуçмалла», мĕншĕн тесессĕн «пĕтĕм этемлĕхĕн интересĕсем урса кайнă çынвĕлеренсен шайкине, гитлерла Германин правительстви текенскере, часрах тата яланлăхах пĕтерсе хума хушаççĕ».

Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ
В. МОЛОТОВ.

Мускав хули, 1942 çулти октябрĕн 14-мĕшĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Октябрĕн 14-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Октябрĕн 14-мĕшĕнче фронтсенче паллă улшăнусемех пулман.

* * *

Октябрĕн 13-мĕшĕнче пирĕн авиаци фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 5 танкне тата войскăсем турттарса пыракан 10 автомашинине пĕтерсе тăкнă, артиллерин 2 батарейине пусарса лартнă, противникăн пехотине пĕр ротăна çити сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинград районĕнче пирĕн войскăсем противник пехотин тата танкĕсен атакисене сире-сире янă. Н-ски чаçăн артиллерисчĕсем нимĕçсен 3 дзотне ишĕлтерсе антарнă, 5 орудине, 7 пулеметнăй точкине, боеприпассем турттарса пыракан 12 автомашинипе пĕтерсе тăкнă тата нимĕçсен пехотине икĕ ротăна çити вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре вырăнти çапăçусем пынă. Н-ски гвардейски часть хӳтĕлесе тăракан позицисене противник икĕ ротăна çити пехота вăйĕпе атакăланă. Пирĕн боецсем тăшманăн атакине сирсе янă. Çапăçу хирĕнче нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсен 100 вилли таран выртса юлнă. Гвардеецсем 7 пулемет, 60 винтовка тата патронсем тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Моздок районĕнче пирĕн чаçсем противникпа çапăçнă. Пĕр участокра нимĕçсен пĕр полк пехоти, танксем пулăшса пынипе, пирĕн позицисене атакăланă. Нимĕçсен уйрăм танкĕсем пирĕн оборона ăшне савăлланса кĕрсе кайма пултарнă. Пирĕннисем противник танкĕсен çав ушкăнне пĕтерсе тăкасшăн çапăçнă. Ытти участоксенче гитлеровецсен пĕчĕк ушкăнĕсем тунă атакăсене сирсе янă.

* * *

Новороссийскран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре Матушенко юлташ командир пулса тăракан артиллери чаçĕ нимĕçсем йышăнса тăракан чугунçул станцийĕнче боеприпассем тиенĕ икĕ поезда сирпĕнтерсе янă.

* * *

Полесье облаçĕнче кĕрешекен партизансен ушкăнĕ нимĕçсен фашистла оккупанчĕсен поездне ӳпĕнтерсе янă. Пĕр паровоз, горючи тултарнă 7 цистерна тата ытти çар грузĕсемпе пынă темиçе вагон çĕмĕрĕлнĕ.

* * *

Венгерецсен 31-мĕш пехотнăй полкĕн 6-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ лейтенант Георг Паважаи çапла каласа панă: «Фронта ярас умĕн нимĕç офицерĕсем пире çапла калатчĕç: артиллери вăйлăн персе тăрсан, вырăссем хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкса малалла çăмăллăнах кайма пулать, тетчĕç. Çавăн пек калани пĕрре те тĕрĕс маррине малтанхи çапăçусемех кăтартрĕç. Вырăссен вăйĕсене тивĕçлĕ хак паманни пире те хакла ларчĕ. Пирĕн батальон У. ялĕ çине наступлени пуçласа ячĕ. Эпир йывăр çухату тӳсрĕмĕр, малалла пĕр метр та каймарăмăр. Часах вырăссем контратака турĕç те, пирĕн подразделенисене каялла чакарса арпаштарса ячĕç. Салтаксем тарса пĕтрĕç, вара манăн ирĕксĕрех тыткăна парăнмалла пулчĕ. Венгерецсен чаçĕсенче салтаксем фронтран инçетре тăнă чухне кăна дисциплина лайăх пулнă. Фронтра салтаксем вăрçасшăн мар пулни палăрчĕ. Вĕсем пытанса çӳреççĕ, юри кая тăрса юлаççĕ. Çапăçу хĕрсе кайнă вăхăтра нумайĕшĕ тарса саланаççĕ. Офицерсен салтаксене пуçтарма тивет, вĕсене çапăçăва персе пăрахассипе хăратса хăваласа кĕртме тивет. Салтаксем час-часах çапла ыйтаççĕ: «Мĕншĕн пире вырăссемпе вăрçма хăвалаççĕ?», «Кунта, Российăра, пире, венгерецсене, мĕн кирлĕ?» теççĕ. Офицерсем вĕсене çав ыйтусем çине ăнланмалли ответ пама пултараймаççĕ»

* * *

12-мĕш танковăй дивизири 5-мĕш мотострелковăй полкăн 6-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ салтак Герман Фибелькори çапла каласа панă: «Эпĕ айăпа кĕрсе Штеттинра, Грабуенцра тата ытти хуласенче те штрафной батальонсенче пултăм. Сентябрь уйăхĕнче нимĕçсен командованийĕ штрафной батальонсенчен 2.000 çынна Российăна, 12-мĕш танковăй дивизие çын хушса пама ячĕ. Мана 6-мĕш ротăна ячĕç, унта çĕнĕрен хушса панă салтаксемпе мĕнпурĕ 180 çын пулчĕ. Фронтра эпĕ пĕр кун хушши те пулаймарăм. Усăсăр атака тунипе, икĕ сехет хушшинче ротăра 70 çын ытла вилсе е аманса пĕтрĕç».

* * *

Калинин облаçĕнчи Ашевски районра нимĕçсем 72 яла тĕппипех çунтарса янă. Пушарта 5.350 çуртйĕр, вăл шутра колхозниксен 1.310 пӳрчĕ, шкулсем, больницăсем тата хуçалăх çурчĕсем нумай çунса кайнă. Туллимар даннăйсем тăрăх, гитлеровецсем Ашевски районра 110 çынна персе пăрахнă е асаплантарса вĕлернĕ.

* * *

Югослави партизанĕсем Вргинмост хулинчен Итали оккупанчĕсене хăваласа кăларнă. Гитлер тарçисемпе хаяррăн çапăçса, партизансем итальянецсене икĕ ротăна çити пĕтерсе тăкнă. Партизансен темиçе отрячĕ Кутины районĕнчи (Хорватия) нефть промыслисене тапăннă. Вĕсем 9 скважинăна юрăхсăра кăларнă, нефть запасне çунтарса янă тата промысла территорине сыхласа тăракан нимĕçсен 170 салтакне вĕлернĕ.

Октябрĕн 15-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Октябрĕн 15-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле фронтсенче паллă улшăнусемех пулман.

* * *

Сталинград районĕнче нимĕçсен пехоти танксем пулăшса пынипе пирĕн позицисене темиçе хут та атакăланă. Пирĕн войскăсем противникăн атакисене сире-сире янă, ăна пысăк çухатусем тӳстернĕ. Пирĕн артиллери темиçе танка, артиллерин 8 батарейине тата минометсен 2 батарейине пĕтерсе тăкнă, нимĕçсен пехотине икĕ батальона çити сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре Н-ски чаçăн боецĕсем противникăн пилĕк контратакине сирсе янă, нимĕçсен 300 салтакĕпе офицерне çити пĕтернĕ. Пирĕн артиллери 12 пулеметнăй точкăна пĕтерсе тăкнă, 14 дзота тата противникăн миномет батарейине çĕмĕрнĕ. Пирĕн пĕр чаçăн разведка тăвакан отрячĕ гитлеровецсен окопĕсене çĕмĕрсе кĕрсе кайнă та штык вĕççĕн çапăçса 50 нимĕç салтакне вĕлернĕ.

* * *

Моздок районĕнче пирĕн чаçсем противникăн танкĕсемпе тата пехотипе çапăçнă. Нимĕçсен пĕр высотăна тытса илме хăтланнă пехотин атакисене сирсе пырса, пирĕн боецсем противникăн 400 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă. Совет летчикĕсем нимĕçсен 7 танкне, 40 грузовой тата 3 çăмăл автомашинине, зенитнăй пулеметсен 3 точкине пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче противникăн 4 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Ленинград фронтĕнче пирĕн подразделенисем икĕ кун хушшинче нимĕçсен 300 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă. Артиллеристсемпе минометчиксем 12 дзота çĕмĕрнĕ, полевой тата зенитнăй артиллерин 4 батарейине пусарса лартнă. Снайпер Смирнов юлташ виçĕ кун хушшинче 22 гитлеровеца вĕлернĕ. Снайпер Ярцев юлташ 19 нимĕç салтакĕпе офицерне вĕлернĕ.

* * *

Çурçĕр-Хĕвеланăç фронтĕнче икĕ енĕ те пĕр-пĕрин çине артиллерипе тата минометсемпе персе тăнă. Багашинский юлташ командир пулса тăракан артиллери подразделенийĕ противникăн склачĕсем çине сасартăк вăйлăн пеме тытăннă. Тĕлленĕ вырăнта виçĕ хутчен вăйлă взрыв пулнă, тĕрлĕ çĕрте çулăм вăйлăн ялкăшни тата тĕтĕм мăкăрланса хăпарни курăннă. Гварди лейтенанчĕсен Гордиенкăпа Акимовăн противотанковăй пăшалсен расчечĕсем юлашки çапăçусенче нимĕçсен 6 танкне вут тивертсе янă.

* * *

Витебск облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ нимĕçсен фашистла оккупанчĕсен войскăсем, хĕçпăшалсем тата боеприпассем турттарса пыракан 4 поездне ӳпĕнтерсе янă. Çав отрядăн партизанĕсем икĕ эрне хушши çапăçса 900 нимĕç салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Нимĕçсен 16-мĕш мотодивизийĕнчи сапернăй батальонăн иккĕмĕш ротинчен тыткăна лекнĕ ефрейтор Алоиз Драконер çапла каласа панă: «Иккĕмĕш ротăра кăçалхи çуллахи çапăçусенче 180 çын пĕтнĕ. Ун хыççăн ăна ултă хутчен çĕнĕ вăйсем хуша-хуша панă. Хушса панă салтаксенчен нумайĕшĕ ĕнтĕ тахçанах çĕр айĕнче çĕрсе кайнă, ыттисем уксах е чăлах пулса юлнă, вĕсене тыла ăсатнă. Ротăра пĕлтĕр июнĕн 22-мĕшĕнче Россия чикки урлă каçнă салтаксенчен пĕри те чĕрĕ юлман. Темиçе кун каялла иккĕмĕш ротăна каллех çынсем хушса пачĕç. Пирĕн пата 17—18 çулхи çамрăксене янă. Çав çĕнĕ салтаксем пĕрремĕш çапăçурах тарса саланчĕç. Эпĕ хам вырăнтах юлтăм, унтан, вырăссем çывăхарса çитсен, алла тăратрăм та тыткăна парăнтăм, мĕншĕн тесен манăн пĕрех те тата тепĕр вырăс хĕлне фронтра пурăнса ирттерес килмест»

* * *

Нимĕçсен 377-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 769-мĕш полкăн 9-мĕш ротинчи ефрейторăн Эрнст Маровинцăн Ядвиг Кюзбер патне яма çырнă çырăвĕнче çапла каланă: «Эпир виçĕ уйăх ĕнтĕ пĕр вырăнтах тапăртатса тăратпăр. Кунта мĕн пулнине эпĕ сана пĕтĕмпех каласа параймастăп. Пирĕн пысăк çухатусем пулчĕç. Эпир Францирен тухса килнĕ чухне пирĕн ротăра 200 çын ытлаччĕ. Халĕ 30 çын çеç тăрса юлчĕ»

Отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенче

Моздок районĕнче

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, октябрĕн 14-мĕшĕ. (**ТАСС спецкорĕ**). Моздок районĕнче юлашки кунсенче пирĕн чаçсем противникпа оборонăра тăрса çапăçнă. Кунта çапăçăва нимĕçсен йывăр артиллерийĕ тата нумай кĕпçеллĕ миномечĕсем нумаййăн хутшăннă.

Нумай участоксенче тăшман хĕснине сирсе янă. Çав çапăçусенче противникăн салтакĕсемпе офицерĕсем йышлăн пĕтнĕ. Совет пехоти тата артиллери тăшманăн 4 автомашинине, артиллерин пĕр батарейине пĕтерсе тăкнă, боеприпассен складне сирпĕнтерсе янă.

Противника совет авиацийĕ чылаях пысăк çухатусем кӳрет. Летчиксем икĕ кун хушшинче нимĕçсен темиçе танкне, вуншар грузовой тата çăмăл автомашинине, артиллерин 11 зенитнăй установкине тата зенитнăй пулеметсен 3 точкине пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче фашистсен 4 самолетне персе ӳкернĕ.

Паян, октябрĕн 14-мĕшĕнче хăйсен вăйĕсене чăмăртаса çитерсе, нимĕçсем чылай участоксенче çĕнĕрен наступлениллĕ çапăçусем пуçласа ячĕç. Тăшманăн атакисенче пĕр батальонран пуçласа виçĕ батальона çити пехота тата 10-ран пуçласа 60 çити танксем çапăçаççĕ. Хĕрӳ çапăçусем пуçланса кайрĕç.

Г. ОШАРОВСКИЙ.

Сталинград районĕнче канонерски лодкăсем чаплă çапăçаççĕ

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, октябрĕн 14-мĕшĕ. (**ТАСС спецкорĕ**). Сталинград районĕнче кĕрешекен пирĕн пĕр пехотнăй подразделение противник танкĕсен пысăк ушкăнĕ атакăланă. Танксем хыççăн нимĕçсен мотопехоти пынă. Пирĕн оборонăна татас шухăшпа пирĕн позицисем çинелле тăшманăн 50 ытла машини кĕрлесе пынă. Çитменнине тата подразделенин çывăхри тылне нимĕç автоматчикĕсен чылаях пысăк десанчĕ анса ларнă. Çаксене пула подразделенишĕн йывăр лару-тăру сиксе тухнă. Анчах та пирĕн подразделение нимĕçсем çавăн пек тапăнма пуçласа янине канонерски лодкăн наблюдательнăй пунктĕнче асăрханă. Инçене перекен орудисем харăссăн пере-пере янă. Тинĕс артиллерийĕ тăшманăн танкĕсене сапаласа яричченех, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкиччченех пеме чарăнман. Нимĕç автоматчикĕсем пӳртсенче çирĕпленсе ларма хăтланнă. Вара канонеркăсем дистанциллĕ снарядсемпе пеме тытăннă. Комендорсем пӳртсем çине тĕл пенĕ. Унта çирĕпленсе ларма шутланă нимĕçсен ирĕксĕрех урамалла чупа-чупа тухма лекнĕ. Кунта вĕсене пирĕн пехота вучĕ çулса тăнă. Çапла пирĕн оборонăна татса çурас хăрушлăха пĕтерсе пăрахнă. Противник кĕтмен çĕртен сасартăк пырса çапассине сирсе янă.

Канонерски лодкăсен хĕçпăшалĕсем хăватлă, вĕсем кирек мĕнле маневрсене те лайăх туса ирттерме пултараççĕ. Чи ответлă вырăнсене сасартăк пырса тухса, вĕсем нимĕçсен фашистла захватчикĕсене пысăк çухатусем кӳреççĕ.

Октябрьти сĕм-тĕттĕм каçра краснофлотецсен десанчĕ противникăн оборони ăшне кĕрсе кайнă. Тинĕс пехотине канонерски лодкăсем çинчи артиллери персе вăйлăн пулăшса тăнă. Атака çав тери хăвăрттăн пулса пынипе, нимĕçсем контратака тума та хатĕрленсе çитеймен, вĕсен каялла чакмалла пулнă. Анчах та тепĕр кунне танксем илсе пырса, нимĕçсем наступлени пуçласа яма хăтланнă. Краснофлотецсене каллех канонеркăсем вăхăтра пулăшнă. Вĕсем çинчи орудисем ăнăçлăн пенипе нимĕçсен танкĕсене сапаласа янă. Краснофлотецсен отрячĕ хăй йышăнса илнĕ рубежра лайăх çирпĕленсе ларнă.

Н. МАРКОВСКИЙ

ОРЛОВ ГЕРОЙĂН ĔÇĔСЕМ ХАВХАЛАНТАРАÇÇĔ

Пирĕн чаçа паян «Чăваш Коммуни» хаçатăн пĕр номерĕ килчĕ Унта чăваш халăхĕн мухтавлă ывăлĕ, Совет Союзĕн Геройĕ Ф. Орлов юлташăн тăван çĕршыв умĕнчи пархатарлă ĕçĕсем çинчен çутатса панă. Çак хаçата илсенех политработниксем тата агитаторсем красноармеецсене—Чăваш республикинчен килнĕ юлташсене Федот Орловăн геройла ĕçĕсем çинчен каласа пачĕç.

— Нимĕç фашисчĕсем Совет Союзĕнчи халăхсен ирĕклĕхне пĕтерессшĕн, вĕсене нимĕç банкирĕсен, баронĕсен чурисем тăвасшăн. Çук, нихăçан та эпир нимĕç баронĕсен чурисем пулас çук, тăван çĕршывшăн пĕтĕм вăй-хала хурса кĕрешсе, нимĕç оккупанчĕсене пĕр йытă юлмиччен пĕтерсе тăкатпăр, Орлов геройăн ĕçĕ пире тăшмана хирĕç татах та хăватлăнрах кĕрешме хушать,—терĕç боецсем.

Пирĕн чаçри вырăс, тутар, башкир, чăваш, украинец, белорусс красноармеецĕсем пурте пĕр çын пек пулса тăшмана хирĕç çапăçаççĕ, боеприпассемпе продовольствие малти линисене вăхăтра илсе çитерсе мухтавлă ĕçсем тăваççĕ. Орлов пек геройсен ĕçĕ, тылри рабочисемпе колхозниксен стахановла ĕçĕ фронтовиксене тăшмана хирĕç хаяррăн кĕрешме хавхалантарать.

Старш. политрук Р. ШАШКОВ.

Хроника

ССР Союзĕн Совнаркомĕ А. М. Василевский генерал-полковника тата Хĕрлĕ Çарăн Главнăй Политикăллă Управленин начальникне А. С. Щербакова Оборона Халăх Комиссарĕн заместителĕсем пулма уйăрса лартнă.

Комсомолецсем кĕрхи çĕртме тăвас ĕçе çăнĕлле йĕркеленĕ

Вăрмар районĕнчи колхозсенче кĕрхи çĕртме тăвас ĕçре комсомолецсемпе çамрăксем пуçаруллăн ĕçлеççĕ. Валентин Нагорный патриотăн ĕç меслечĕпе чылай колхозсем анлăн усă курма тытăнчĕç.

Çĕнĕ Вĕренерти «Хĕрлĕ Мăрат» колхозра комсомол организацийĕн секретарĕ Ефим Никитин, комсомолец П. Изосимов тата коммунист Н. Григорьев сентябрĕн 29-мĕшĕнче Валентин Нагорный меслечĕпе кĕрхи çĕртме тума тытăннă. Ĕçе ирхине 6 сехетре тухса, вĕсем мĕн тĕттĕм пуличченех ĕçленĕ. Лашасене кашни 4 сехетре улăштарса пынă. Лашасене пăхма уйра уйрăм конюх тăнă. Вăл лашасене çитернĕ, шăвар, тата сухаçăсем апатланнă вăхăтра сухаланă.

Çавăн пек ĕçленипе малтанхи кунах икĕ касăллă плугпа Е. Никитин 3,36 гектар, П. Изосимов 2,83 гектар, Н. Григорьев 3,27 гектар сухаланă. Талăкри ĕçĕн результачĕсенчен çакă курăннă: 12 лашапа вĕсем пурĕ виççĕн ĕçленĕ, Нагорный меслечĕпе ĕçлемен пулсан — улттăн ĕçлемеллеччĕ. Кашни икĕ касăллă плугпа талăкра 1,20 гектар сухаламалла; çапла 6 плугпа 7,20 гектар сухаламалла пулнă пулсан, вĕсем 9,42 гектар сухаланă.

Малтанхи кунăн результачĕсемпе килĕшмесĕр, паттăр сухаçăсем ĕç тухăçлăхне татах та ӳстермелли майсене пăхса тухнă. Сентябрĕн 30-мĕшĕнче вĕсем ĕçе ирхине 4 сехетре тытăннă. Иртнĕ кунхи майлах ĕçлесе, вăл кун Е. Никитин 4,07 гектар, Изосимов 2,77 гектар, Н. Григорьев вырăнне тухнă колхозница Е. Платонова 3,77 гектар сухаланă.

Валентин Нагорный патриотăн меслечĕпе, комсомолецсем ĕçпе çирĕплетсе кăтартнăскерпе, колхозниксем анлăн интересленме пуçланă. Кĕрхи çĕртме тăвас ĕçе çĕнĕрен темиçе çамрăк хутшăннă. Октябрĕн 3-мĕшĕнче комсомолец П. Изосимов 4,15 гектар сухаланă, унпа пĕрле ĕçе тухнă хĕрачасем Е. Платонова 3,73 гектар, Д. Иванова 3,63 гектар сухаланă. Çапла вăл кун вĕсем виççĕн 11,51 гектар кĕрхи çĕртме тунă. Вĕсен ĕçри лайăх результачĕсене курса кĕретĕн курса октябрĕн 4-мĕшĕнче кĕрхи çĕртме тума тата ытти çамрăксем хутшăннă. Комсомолецсемпе çамрăксем кĕрхи çĕртмене стахановла методпа тума бригада организациленĕ.

ВЛКСМ Вăрмар райкомĕ «Хĕрлĕ Мăрат» колхозри комсомолецсен паха ĕçне анлăн сарас тĕлĕшпе комсомолăн колхозсенчи пуçламĕш организацийĕсен секретарĕсемпе канашлу туса ирттерчĕ. Вăл канашлура ВЛКСМ Центральный Комитечĕ кăтартса панă тăрăх кĕрхи çĕртме тăвас тĕлĕшпе октябрĕн 10-мĕшĕнчен пуçласа комсомолецсемпе çамрăксен çирĕм кунлăхне организацилесе ирттерме, вăл çирĕм кунлăх хушшинче кĕрхи çĕртме тунă çĕрте пур колхозсенче те Валентин Нагорный меслечĕпе анлăн усă курма кирлине кăтартса хăварчĕ.

Паянхи куна чылай колхозсенчи комсомолецсемпе çамрăксем кĕрхи çĕрте тăвас ĕçе активлăн туса пыни курăнать. Кĕрхи çĕртмере Нагорный меслечĕпе ĕçлеме халь «Маяк» колхозри комсомолецсем пуçларĕç. Вĕсен ĕçне колхоз председателĕ И. Туртушов юлташ активлăн пулăшса пырать. Комсомолец Н. Веселовский малтанхи кунах 2,77 гектар, М. Артюков 2,75 гектар, А. Петроградская юлташ 2,70 гектар сухаларĕç.

Комсомолăн колхозсенчи организацийĕсем кĕрхи çĕртме тунă çĕрте Нагорный юлташăн меслечĕпе ĕçлессине тата анлăрах сармалла. Ĕçе çамрăксен пĕтĕм вăйне мобилизацилесе, ноябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне кĕрхи çĕртме тумалли плана ăнăçлăн пурнăçламалла.

И. ЗАЛЕВСКИЙ,
ВЛКСМ Вăрмар райкомĕн секретарĕ.

· ХĔРЛĔ ОБОЗСЕМ

СЕНТЕРВĂРРИ, октябрĕн 15-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри колхозсем государствăна ялхуçалăх продукчĕсем парса татас тĕлĕшпе уяв ячĕпе хĕрлĕ обозсем организацилеççĕ. «Верный путь» колхоз, октябрĕн 12-мĕшĕнче 20 лавран хĕрлĕ обоз организацилесе, государствăна 244 пăт çĕрулми леçрĕ. Колхоз государствăна çĕрулми леçме ĕнер татах 10 лав ячĕ.

Т. К.

Колхозниксен активлăхĕ ӳсрĕ

ШĂМАРШĂ. «Победа» колхоз членĕсем Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли 62 килограмм тулă çăнăхĕ, 40 килограмм çĕрулми, пĕрер килограмм пыл, çу тата ытти çимелли япаласем те ячĕç.

Колхозниксем, халĕ, Октябрь уявне хатĕрленнĕ май, хăйсен ĕçри активлăхне темиçе хут ӳстерчĕç. Авăн çапас, государствăна тырă парас ĕçсем колхозра хĕрӳллĕн пулса пыраççĕ.

П. КУЗЬМИН.

Всевобуч пунктĕнче

Всевобучăн Атнашри пунктĕнче (Шăхасан районĕ) çар ĕçне вĕренесси лайăх пырать, дисциплина çирĕп. Всевобуч боецĕсем пурте «отлично» тата «хорошо» паллăсемпе кăна вĕренеççĕ. В. Кузнецов юлташ командир пулса ертсе пыракан çамрăксемпе комсомолецсен взвочĕ ротăра малти вырăнта тăрать. Боецсем: И. Кириллов, В. Артемьев, П. Димитриев, М. Монастырский, П. Анисимов отлично вĕренеççĕ. Вĕренӳ пункчĕ кăçал тактикăллă занятисем тăтăшах туса ирттерет. Сентябрĕн 21-мĕш числинче пулнă тактикăллă занятире В. Кузнецов взвочĕ мала тухрĕ. Унăн боецĕсем çирĕп дисциплинăллă пулни, миномет расчечĕ валли лайăх вырăн суйласа илме пĕлни палăртĕ.

Боецсен политикăллă пĕлĕвне ӳстерес тĕлĕшпе вĕренӳ пункчĕн политрукĕ Г. Степанов юлташ лайăх ĕçлет. Вĕренӳ пункчĕ 6 экземпляр ытла хаçат-журнал илсе тăрать. Библиотекăра кĕнекесем нумай. ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ Алексеева юлташ «Хĕрлĕ Çарăн вăй-хăвачĕ тата унăн çитĕнĕвĕсем» темăпа, №-ски госпиталĕн комиссарĕ «Фронтра тата тăшман тылĕнче» темăпа лекци вуласа пачĕç. Боецсемпе командирсем çак лекцисене тимлĕн итлерĕç.

Боецсем çар ĕçне тăрăшса вĕреннипе пĕрлех красноармеец-фронтовиксен çемьисене вутă хатĕрлесе параççĕ. Чăрăшкасси колхозĕнче 1,5 гектар çĕрулми кăларса пуçтарса панă. «Пинер» колхоза 2 гектар ытла пăрçа кӳрсе панă.

А. ШИВЧУРИН.

Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăрту

„Труженик“ завод хăйĕн ĕçне лайăхлатрĕ

ÇĔМĔРЛЕ. (Хамăр корр.). «Труженик» заводри рабочисемпе работницăсем юлашки уйăхсенче, тăван Хĕрлĕ Çара татах та ытларах пулăшас тесе, вăйлăрах ĕçлеме тытăнчĕç. Кашниех вĕсем пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлесе ытларах продукци туса кăларма тăрăшаççĕ. Вĕсем пĕлеççĕ: тылра стахановла ĕçлени, фронтри кĕрешӳ пекех, çĕнтерӳ тума пулăшать.

Завод коллективĕ I-мĕшпе II-мĕш кварталсенче хăйне панă плана тултарайман. Çакă рабочисене кӳрентернĕ. Анчах завод япăх ĕçленин сăлтавĕ, чăн малтанах, ĕç вăйĕ тата продукци кăлармалăх материалсем çитменнинче, ĕç вăйне тĕрĕс организацилемениинче пулнă. Çавсене пула ĕнтĕ час-часах станоксем, агрегатсем ахаль ларнă, вĕсене кирлĕ пек ĕçлеттермен.

Юлашки вăхăтра завод дирекцийĕ çак çитменлĕхсене пĕтерес тесе тимлĕн ĕçлерĕ. Ку тĕлĕшпе уйрăмах коммунист-технорук Шустов юлташ вăя хурса ĕçленине палăртмалла. Вăл кĕске вăхăт хушшинчех производствăра çирĕп йĕрке тума, ĕçĕн технологиллĕ процесне урăхлатса çĕнетме нумай пулăшрĕ. Рабочисемпе работницăсем ĕçкунĕпе туллин усă курма тытăнчĕç, вĕсем хушшинче ăмăрту татах та анлăрах сарăлса кайрĕ. Çаксем ĕнтĕ пĕтĕм завод ĕçĕнче паллă улшăну тума май пачĕç. Завод коллективĕ III-мĕш кварталри плана 109,6 процент тултарчĕ.

Коллектив уйрăмăнах сентябрь уйăхĕнче тухăçлăн ĕçлерĕ. Ку уйăхăн программине вăл 150 процент ытла тултарчĕ. Çавăнпа пĕрлех ку уйăхра стахановецсен хисепĕ те чылаях ӳсрĕ. Стахановецсемпе ударниксен хисепĕ паянхи куна 80 процента çитрĕ. Вĕсем хушшинче двухсотниксемпе трехсотниксем те сахал мар. Акă машиннăй отделенинчи станочница Ванина, подручнăй Игнатьева, торцовщицăсем Кузьминапа Горячева юлташсем сентябрь уйăхĕнче кашниех нормăсене 300 процент, станочницăсем Зубрилинăпа Похвалинская юлташсем — 290 процент тултарса ĕçленĕ.

Юлашки вăхăтра слесарь коммунист Сидоров, станочница Балагаева юлташсем двухсотниксен ретне тăчĕç. Вĕсем пĕр брак тумасăр, кашни минутăпа туллин усă курса ĕçлеççĕ.

Чăвашдревпромсоюз «Труженик» заводăн çитĕнĕвĕсене паллă туса, çак кунсенче ăна производствăра малта пыракансене преми пама 5 пин тенкĕ укçа уйăрса панă. Ку хыпар рабочисене татах та тухăçлăрах ĕçлеме хавхалантарчĕ. Вĕсем Октябрьти аслă уяв умĕнхи ăмăртăва хутшăнса, хăйсем çине конкретнăй обязательствăсем илчĕç. Рабочисем халĕ пуçланнă ремонт ĕçне хăвăртлатса, ăна октябрĕн 20-мĕшĕччен вĕçлеме, уйăх планне ăнăçлăн тултарма сăмах пачĕç.

— Тăван çĕршыв умне хăрушлăх тухса тăнă вăхăтра эпир хамăрăн вăйхала пĕтĕмпех фронта пулăшнă çĕре паратпăр. Пирĕн сăмах—пурте фронт валли, пурте çĕнтерӳ тума! — теççĕ рабочисем.

Х. ЛИСИН.

Панă сăмаха пурнăçа кĕртеççĕ

КАНАШ. Çулйĕр Халăх Комиссариачĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне илнĕ вагонсем юсакан заводри рабочисемпе работницăсем пирĕн пысăк уява—Октябрьти социализмлă аслă революци 25 çул тултарнине — тимлĕн ĕçленипе, ĕç тухăçлăхне хăпартнипе, продукци пахалăхне лайăхлатнипе кĕтсе илеççĕ. Вĕсем уяв умĕнхи ăмăртăва хутшăнса хăйсем çине илнĕ обязательствăсене çак кунсенче ытлашшипех пурнăçласа пыраççĕ.

Инструментальнăй цехри стахановец Котенков юлташ, куллен икшер норма тултараканскер, уяв умĕнхи ăмăртура икĕ çурăшар норма тултарма пулнă. Панă сăмаха çирĕп тытса, Котенков юлташ виçшер норма та тултарать. Унăн продукци пахалăхĕ те аван.

Çак цехри Осипов, Никитин, Григорьев стахановецсем те хăйсен обязательствисене пурнăçа кĕртсе пыраççĕ.

Аслă уяв умĕнхи кунсенче ĕç тухăçлăхне ӳстернине заводăн ытти цехĕсенче те курма пулать. Йывăççем каскалакан цехри столяр Андропов, слесарь Мясников юлташсем нормăна кашни кун 300 процента яхăн тултараççĕ, Павлов слесарь вара 400 процента та çитерет.

Паллă стахановец-строгальщик Гимранов юлташ хальхи вăхăтра питех те кирлĕ детальсем хатĕрленĕ çĕрте ĕçлет. Хăйĕн производствине пĕрмаях лайăхлатса пырса, сменăри заданисене вăл 5 хут ирттерсе тултарать. Пĕр-пĕринпе ăмăртакан токарьсем Сычевпа Демьянков юлташсем те унтан юлмаççĕ.

Аслă уява ĕçри çĕнĕ çитĕнӳсемпе кĕтсе илес—çакăн пек заводри стахановецсен ĕмĕчĕ.

Уяв ячĕпе илнĕ обязательствăна пурнăçларăмăр

ВĂРМАР, октябрĕн 15-мĕшĕ. (Телефонпа). Спорт инвентарĕсем тăвакан фабрика коллективĕ, Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнса, çулталăкри производство программине продукци туса кăларас енĕпе ноябрĕн 7-мĕшĕ тĕлне 125 процент тултарма обязательство илнĕччĕ. Рабочисемпе работницăсем, инженерла-техникла работниксем, вăрçă вăхăтĕнчи хăвăртлăхпа ĕçлесе, çак обязательствăна палăртнă срокран виçĕ эрне малтан — октябрĕн 14-мĕшĕ тĕлне пĕтĕмпех пурнăçларĕç. Халĕ коллектив çулталăкри плана тата ытларах ирттерсе тултарассишĕн кĕрешет.

Уяв умĕнхи ăмăртура рабочисемпе работницăсен ĕç тухăçлăхĕ палăрмаллах ӳсрĕ. Сентябрьти нормăна кашни рабочи вăтамран 128 процент тултарнă. Уйрăмах опытлă стахановецсен ĕç тухăçлăхĕ пысăк. Станочницăсем Е. Голубева, Е. Федорова юлташсем сентябрьти нормăна 202-шер процент, станочник Н. Терентьев юлташ 230 процент тултарнă. С. Елизарова, И. Кириллова работницăсен ĕç тухăçлăхĕ вĕсенчен те пысăкрах.

Халĕ фабрика оборонăллă çĕнĕ продукцие массăллăн туса кăларма тытăнас тĕлĕшпе ĕçлет. Çак ĕçре пирĕн инженерла-техникла работниксем пуçарулăхпа пултарулăх кăтартаççĕ.

И. ГОРБУНОВ,
Фабрика директорĕ.

Ют çĕршывсенче

Германи салтакĕсем Совет Союзĕпе Германи фронтне ярассинчен хăраççĕ

СТОКГОЛЬМ, октябрĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Норвегирен килнĕ хыпарсем тăрăх, Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронта кайма килĕшмен нимĕç салтакĕсене çĕршер çынна Норвегири концлагерьсене хупнă. Пĕр лагерьте кашни улттăмĕш салтака персе вĕлернĕ. Ытти лагерьсенче пуринче те кашни вуннăмĕш çынна персе вĕлернĕ. Апла пулсан та Германин Норвегири салтакĕсем Совет Союзĕнчи фронта ярасран хăтăлмашкăн тем те пĕр туса пăхаççĕ. Çав фронтран салтаксем питĕ хăраççĕ, унта ямалли салтаксем нумайĕшĕ хăйсене хăйсем вĕлернĕ. Хĕвелтухăç Норвегири хуласем урлă нимĕçсен хĕçпăшалсăрлатнă тата măшăрăн-măшăрăн çыхса лартнă салтакĕсене илсе каякан поездсем ирте-ирте каяççĕ.

Германия Виши правительствине панă ультиматум

ЖЕНЕВА, октябрĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Дипломатиллĕ çынсем пĕлтернĕ тăрăх, Германин Францири уполномоченнăйĕ Абец Лавале васкаса Парижа чĕнсе илнĕ. Ăна унта Гитлер ячĕпе меморандум панă. Çав меморандумра темиçе çĕнĕ требовани пур. Абец Лавале çапла пĕлтернĕ: Германин требованийĕсене «пурне те туллин» пурнăçа кĕртмесен, Гитлер Францин оккупацилемен зонине те контрольлесе тăма пуçласшăн, тенĕ. Пĕлекен çынсем çапла калаççĕ: октябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне 150.000 француз рабочине Германие яма хушнисĕр пуçне, çав меморандумра тата Францире Германие хирĕçле движение 1942 çул пĕтиччен пĕтĕмпех пусарса лартма хушнă. Франци правительстви çак юлашки требование пурнăçа кĕртме пултараймасан, Германия Виши правительстви çумне хăйĕн комиссарне лартать те Францин оккупацилемен зонине вăрçă тĕлĕшĕнчен хытă контрольлесе тăма пуçлать.

Парижра Лавальпе Абец пĕрле канашласа Германин требованийĕсене пурнăçа кĕртмелли юлашки сроксене палăртса хунă. Лаваль, хăй Парижра пулнипе усă курса, промышленниксемпе «профсоюз» деятелĕсен канашлăвĕсене ирттернĕ. Çав канашлусенче, Гавас-ОФИ агентстви пĕлтернĕ тăрăх, «Лаваль хăй чĕннине ыттисем йышăнмасан Францишĕн питĕ начар пулса тăма пултарни çинчен каласа панă».

Германире эрзацсем çинипе çынсем чирлеççĕ

ЖЕНЕВА, октябрĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Германирен килнĕ врач çапла каласа панă: вăрçă пуçланнăранпа нимĕç халăхĕн пысăкрах пайĕн сывлăхĕ нумай начарланнă. Аслă вырăнта ларакан чиновниксемпе эсэсовецсенчен пуçне, пĕтĕм халăх, çителĕксĕр çинипе, начарланса кайнă. Халăх начарланасси унта продовольстви çителĕксĕрринчен çеç мар, нумай продуктсем вырăнне тĕрлĕ эрзацсем панинчен те килет. Çăкăрпа ытти продуктсем çумне сахал тутăлăхлă, хăшпĕр чухне тата сиенлĕ япаласемех те хутшăнтарнине пула çынсем чирленине врачсем юлашки вăхăтра час-часах тĕл пулаççĕ. Сывлăх органĕсем врачсене диагнозсенче тата чир историйĕнче çынсем эрзацсем çинипе чирленине кăтартса пама чарнă. Апата каякан пур продуктсем çумне те тенĕ пекех хутшăнтаракан универсальнăй эрзац сиенли çинчен вара уйрăмах пĕр сăмах та калама хушмаççĕ.

Словак рабочийĕсем Германирен тараççĕ

ЛОНДОН, октябрĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Германие ирĕксĕрлесе илсе кайнă словак рабочийĕсем Германирен тараççĕ, мĕншĕн тесессĕн вĕсем Германири предприятисенчи каторгăлла ĕç условийĕсене тӳсеймеççĕ. Юлашки виçĕ çул хушшинче Германие словак рабочийĕсене 5 пине яхăн пулнă. Анчах та вĕсем çĕршерĕн киле тавăрăнаççĕ. Таракансен хисепĕ ӳссе пынă пирки Словакин пуканелле влаçĕсем халĕ рабочисене наказани парас шутпа концентрациллĕ лагерьсенчи пек йĕрке тунă специальнăй батальонсене яраççĕ.

АНГЛИ АВИАЦИЙĔ КИЛЕ ТАПĂННИ

ЛОНДОН, октябрĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Англи бомбардировщикĕсен соединенийĕ Киль çине пырса тапăннă.

КĔСКЕН

▲ Октябрĕн 10-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Швейцари çинче икĕ хутчен паллă мар самолетсем вĕçнĕ. Самолетсем Базельпе Цюрих çийĕнчен иртсе кайнă та каялла тавăрăннă чухне Шафхаузен çине çул тытнă. Çурçĕр Альпăра икĕ хутчен сывлăшри тревога туса ирттернĕ.

● Турцире пурăнакан Итали подданнăйĕсене Итали çарне илмелле тунă. Вĕсем Турцирен икĕ уйăх хушшинче тухса каймалла.

▲ 1937 çултанпа — Японипе вăрçма тытăннăранпа — Китайра 11 миллион вăйпитти çынна çара мобилизациленĕ.

▲ Американ хĕçпăшаллă вăйĕсем Японин пĕр йывăр крейсерне, 4 эсминецне тата пĕр транспортне путарнă. Пĕр крейсера тата пĕр эсминеца хытă сиенленĕ.

▲ Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен çар министрĕ Бразилирен тавăрăнсан çапла каланă: тăшманăн подводнăй лодкисемпе пĕрле кĕрешес тĕлĕшпе каласса татăлнă, Бразилин тинĕс-çар флотне халь чылай вăйлатнă, тенĕ.

▲ «Ирландин республикăллă армийĕ» ятлă националистла организацин членĕсем выступлени тунă пирки Бельфаст районĕнче (Çурçĕр Ирландия) çынсене 20 сехет те 30 минута иртсен урама тухма чарнă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Ялхуçалăх çулне ăнăçлăн вĕçлетпĕр

ВКП(б) Калинински райкомĕ хăйĕн пĕтĕм ĕçне СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «1942 çулта тырпулсене пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсене хатĕрлесси çинчен» йышăннă постановление пурнăçа кĕртес ĕмĕтпе туса пычĕ. Районри партипе совет организацийĕсем партипе правительствăн постановленине вăхăтра тата ăнăçлăн пурнăçа кĕртме колхозниксемпе колхозницăсен, коммунистсемпе комсомолецсен пĕтĕм вăйне мобилизацилерĕç.

Партиллĕ-массăллă, агитациллĕ-ăнлантарулла ĕçе тимлĕн туса пынине пула, районри колхозсем тырпулсене вырса пухма пысăк çĕкленӳпе, организованно тухрĕç, çак ответлă ĕçе начар мар пурнăçларĕç. Сентябрĕн 5-мĕшĕ тĕлне район пур йышши тырăсене те пĕтĕмĕшпех вырса пухрĕ. Уйрăм колхозсем, тĕслĕхрен, Айгышевăри Киров ячĕпе тăракан, Хурăн Кăкшăмри «Красноармеец», Шĕнерти «Майăн 1-мĕшĕ», Кăкшăмри «Знамя труда» тата ытти малта пыракан колхозсем тырпулсене август уйăхĕнчех пысăк пахалăхпа пухса кĕчĕç. Тырпулсене пухса кĕртес ĕçре кăтартуллă, лайăх ĕçленипе районри колхозсенчен 15 процентĕ республикăн Хисеп хăми çине кĕме тивĕçлĕ пулчĕ.

Уборка вăхăтĕнче колхозсен уй-хирĕсенче 265 çын агитатор-вулавçăсем тата стена хаçачĕсен редакторĕсем пулса ĕçлерĕç. Вĕсем колхоз производствинче хастарлăн ĕçленипе пĕрлех, колхозниксемпе колхозницăсене куллен Совет информаци Бюровĕн пĕлтерĕвĕсене, хаçатсемпе журналсене вуласа панă, партипе правительствăн постановленине кăтартуллăн пурнăçлама массăна мобилизациленĕ. Стена хаçачĕсемпе боевой листоксен страницисем урлă вĕсем уборкăри стахановецсемпе ударниксен ĕçне кăтартса пычĕç, кая юлакан бригадăсемпе уйрăм колхозниксен ĕçне критикăласа лайăхрах ĕçлеме çул кăтартса пачĕç.

Тырпулсене вырнă вăхăтрах кĕлте турттарса капана хывас ĕçе те вăрçă вăхăчĕ ыйтнă пек хăвăрт тумалла пулчĕ. Уборкăн малтанхи кунĕсенчех кĕлтесене капана хывас тĕлĕшпе пирĕн район кая юлнăччĕ. Ку вăл эпир кĕлтесене капана алăпа йăтса хывас ĕç çине кирлĕ пек çавăрăнса пăхманнипе пулчĕ. Анчах ĕçри йăнăшa эпир вăхăтра тӳрлетрĕмĕр. Мăн Явăш ялсоветĕнчи Ленин ячĕпе тăракан колхозра райсовет исполкомĕн работникĕ Зайцев юлташ пуçаруллăн ертсе пынипе, пĕр талăк хушшинче алăпа çĕклесе кашни колхозник пĕрер гектар çинчи кĕлтесене капана хывнă. «Смычка» колхоз членĕсем пурĕ 60 çын пĕр кун ирхине 3 сехетрен пуçласа 6 сехете çитичченхи вăхăтра алăпа çĕклесе 12 гектар çинчи кĕлтесене капана хывнă. Ĕçе çапла организациленипе кĕлтесене капана хывас ĕçе районри колхозсем сентябрь уйăхĕ пĕтнĕ тĕле пĕтĕмĕшпех вĕçлерĕç.

Иртнĕ çул эпир тырпула тăккаласа хăварни çине çителĕклĕ таран çавăрăнса пăхман. Çавăнпа тырпулăн пĕр пайĕ уйра тăккаланса юлчĕ. Михаил Иванович Калинин ялсовет исполкомĕсен председателĕсем патне янă çыру кăçал тăккаланчăксемпе кĕрешме пур колхозниксемпе колхозницăсене те вăйлăн хистерĕ, ку тĕлĕшпе ялсовет исполкомĕсемпе колхоз председателĕсем те хăйсен ĕçĕнче кирлĕ мерăсем йышăнчĕç. 72 жнейка тата 3 лобогрейка зерноуловительсемпе ĕçлерĕç, шкул ачисемпе учительсем пучах пухас ĕçе массăллăн туса пычĕç, кашни колхозрах ĕç пахалăхне сăнаса тăракан инспекторсем пулчĕç.

Нумай колхозсем кăçал пĕрремĕш хут тырăсене кĕреплеллĕ çавасемпе анлăн вырчĕç. Çакăнта ĕç майне вĕрентни, тăккаланчăксене çийĕнчех пуçтарса пыни кирлĕ пулчĕ. Районри шкулсенче вĕренекен ачасен ĕç отрячĕсем 1.107 гектар çинче çеç 6.137 килограмм ытла пучах пухнă. Çапла тăкаксемпе кĕрешес ĕçе вăхăтра организацилени тырпула темиçе тонна ытларах пухса кĕме май пачĕ, çак ĕçех авăн çапнă çĕрте те хăйĕн лайăх результачĕсене кăтартма тивĕçлĕ.

Октябрĕн 5-мĕшĕ тĕлне районри 11 колхоз авăн çапса пуçтарчĕç. Анчах та район пĕтĕмĕшпе илсен кăçал авăн çапас ĕçре питех те кая юлса пырать. Октябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне районĕпе пурĕ те 63,3 процент кăна авăн çапнă. Районри хăшпĕр колхозсен руководителĕсем ялхуçалăх ĕçĕсене черетпе туса пырас шухăшсене çийĕнчех сирсе яманнине пула, авăн çапас ĕçре уйăх çутиллĕ уяр каçсемпе усă курма пултараймарăмăр.

Авăн çапас ĕç кая юлса пыни государствăна тырă парас ĕçе те кая хăварса пырать. Пур колхозсем те государствăна тырă пама тытăннă пулсан та, районра 6 колхоз çеç государство умĕнчи хăйсен обязательствисене тултарнă, тепĕр 10 колхоз тырă парас ĕçе çак кунсенче вĕçлеççĕ. Ку ĕçри çитменлĕхсене халех пĕтермелле, государствăна тырă парас ĕçре тивĕçлĕ улшăну тумалла.

Иртнĕ çулта тунă йăнăшсене çирĕп шута илсе кăçал пирĕн районри колхозсем çĕрулмине, пахча-çимĕçсене пухса илес ĕçе пысăк тимлĕхпе туса пыраççĕ. Çĕрулмине октябрĕн 3-мĕшĕ тĕлне район пĕтĕмĕшпех кăларса пуçтарчĕ. Государствăна çĕрулми, пахча-çимĕç парас ĕç ăнăçлăн пулса пырать. Район умĕнче тăракан задача — пахча-çимĕçсемпе çĕрулми памалли обязательствăсене халех парса татмалла, государствăна пахча-çимĕçпе çĕрулми типĕтсе парас ĕçе хăвăрт пурнăçламалла.

Тăван çĕршыв, Хĕрлĕ Çар социализмлă ялхуçалăхĕ умне лартнă задачăсене тĕплĕн тата вăхăтра пурнăçлас ĕçре ялсенчи коммунистсен вырăнĕ калама çук пысăк. Коммунистсем ертсе пыракан колхозсем ку задачăсене пысăк ăнăçлăхпа пурнăçласа пыраççĕ. Парти членĕ В. И. Иванов председатель пулса ĕçлекен Шĕнер ялсоветĕнчи «Майăн 1-мĕшĕ» колхоз тырпулсене пухса кĕртес ĕçе пысăк пахалăхпа вĕçлерĕ. Государствăна районри колхозсенчен чи малтан махорка пачĕ, ялхуçалăхĕнчи пур продуктсем енĕпе те государство умĕнчи обязательствăсене татрĕ. Колхоз фронт панă заданисене пурне те пысăк пахалăхпа тата вăхăтра пурнăçларĕ. Çавăн пекех коммунистсем ертсе пыракан «Смычка», «Социализм», «Комсомолец» тата ытти колхозсем те ялхуçалăхĕнчи ĕçсене вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек туса пыраççĕ.

Пирĕн задача — кашни колхозра 1942 çулти ялхуçалăх çулне пысăк çитĕнӳсемпе вĕçлесси. Кăна тума пирĕн пур условисем те пур. Колхозниксемпе колхозницăсем нимĕç захватчикĕсене вилĕмле кураймаççĕ, нимĕç оккупанчĕсене хăвăртрах пĕтерсе тăкассишĕн вăя шеллемесĕр, татах та нумайрах та лайăхрах ĕçлеме тăрăшаççĕ. Колхозниксен ĕçлес хастарлăхĕ халь нихăçанхинчен те пысăк.

Ф. РОМАНОВ,
ВКП(б) Калинински райкомĕн секретарĕ.

Первичная партийная организация, местком и коллектив Чувашпотребсоюза с глубоким прискорбием извещают о преждевременной смерти сотрудника Планово-Экономического Управления Чувашпотребсоюза, члена ВКП(б) ЛАВРЕНТЬЕВА, ПЕТРА ЛАВРЕНТЬЕВИЧА, и выражают соболезнование его родным.

Коллектив Чувашпотребсоюза.

Сберегательные кассы начали прием выигрышных вкладов.

Тиражи выигрышей по выигрышным вкладам производятся два раза в год.

В каждом тираже на 1000 сберегательных книжек разыгрываются:

1 ВЫИГРЫШ	— в размере 200 % средней суммы вклада по выигравшей сберегательной книжке;
2 ВЫИГРЫША	— каждый в размере 100 % средней суммы вклада по выигравшей сберегательной книжке;
22 ВЫИГРЫША	— каждый в размере 50 % средней суммы вклада по выигравшей сберегательной книжке.

Вкладчику предоставляется право пополнить свой выигрышный вклад или получить его в любое время частями, либо полностью из сберегательной кассы.

ВНОСИТЕ ВЫИГРЫШНЫЕ ВКЛАДЫ В СБЕРЕГАТЕЛЬНЫЕ КАССЫ!

Управление Гострудсберкасс и Госкредита Чувашской АССР.

5—5

К СВЕДЕНИЮ ВСЕХ ОРГАНИЗАЦИЙ И ПРЕДПРИЯТИЙ

Доводится до сведения всех предприятий и организаций, имеющих потребности в санях и бочкокомплектах, что заявки на сани-дровни, бочковые комплекты уголь, клепки, обод, спицу и др. Чувашским отделением Росснабсбыт в 1942 г. будут приниматься до 30/X-42 г. За получением обращаться: г. Чебоксары, Красная Площадь, 19, Чувашотделение Росснабсбыта.

ЧУВАШРОССНАБСБЫТ.

ПРОПАЛА КОБЫЛА черной масти, рождения 1940 года, на лбу звездочка.

Знающих местонахождение ее просим сообщить по адресу: дер. Аса-кассы, Чебоксарского района, колхоз им. Чкалова.

ВНИМАНИЮ БУХГАЛТЕРОВ ПРЕДПРИЯТИЙ, УЧРЕЖДЕНИЙ И ОРГАНИЗАЦИЙ.

В связи с наступлением 15 октября 1942 г. срока полной оплаты стоимости билетов 2-й денежно-вещевой лотереи, бухгалтера всех предприятий, учреждений и организаций обязаны полностью получить от подписчиков деньги в уплату за лотбилеты, вручить им полностью лотбилеты, а билеты, принадлежащие отсутствующим подписчикам, сдать в Центральную (районную) сберкассу при именном списке владельцев билетов с указанием в нем серий и номеров билетов, принадлежащих каждому владельцу.

Все расчеты по Второй денежно-вещевой лотерее должны быть полностью закончены к 25 октября 1942 года.

Управление Гострудсберкасс и Госкредита Чувашской АССР.

ЧУВАШСКОЙ КОНТОРЕ „ТЕХЖИРПРОМ“ ТРЕБУЮТСЯ: бухгалтер, плановик-экономист, кожевник, возчик, временные рабочие.

Обращаться по адресу: Чебоксары, Канашская, 17, Техжирпром. Тел. № 1—66.

ЗАВОДУ ТРЕБУЮТСЯ:

инженеры и техники-технологи по холодной обработке металла, снабженческие и складские работники, бухгалтеры и машинистки, мастер по камен. и штукатурн. работам, строит. десятник, коменданты общежитий.

Квалифицированные рабочие: токари, фрезеровщики, револьверщики, строгальщики, автоматчики, шлифовщики, слесари, электро-монтеры, штамповщики, установщики штампов, электро-сварщики, резчики, прессовщики, лаковары, литейщики, модельщики, шорники-смазчики, маляры, каменщики, печники, штукатуры, плотники, столяры, упаковщики-плотники, подсобные рабочие, грузчики, свинари, уборщицы, дворники, сторожа, шофера, автослесари, такелажники, жестянщики.

Требуются вахтеры и пожарные работники.

Принимаются переквалификанты (ученики от 16 лет) по указанным специальностям.

Обращаться: улица Карла Маркса, 80, бюро пропусков, от 11 до 3 час. дня.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары. ул. Володарского, 5 Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 956 Типография №1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2. Ф 6. 58 84 п. л.